28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ДЕКАБРЬ 30 ВЫРСАРНИКУН 254 (7005) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Колхозăн хушма хуçалăхĕсем

Çĕршер хресченсен пĕрлешӳллĕ хуçалăхĕ пулса тăракан колхозăн чи пирвайхи задачи вăл—государство валли тата пĕр пысăк хуçалăха пĕрлешнĕ колхозниксем валли çителĕклĕ таран тырпулпа пахчаçимĕçсем, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илесси пулать. Çак задачăна пурнăçа кĕртсен кăна колхоз тĕреклĕ пулма тата колхозниксен пурнăçĕ тулăх пулма пултарать. Çакă вара, чи малтан, çĕрпе пĕлсе усă курнинчен, вăл мĕн пама пултарнине йăлтах илнинчен, выльăх-чĕрлĕх йышлă ĕрчетнинчен тата унăн тухăçлăхне пĕрмаях ӳстерсе пынинчен килет. Урăхла каласан, ялхуçалăхĕн тĕп отраслĕсем мĕн чухлĕ лайăхрах аталанса пыраççĕ, колхоз çавăн чухлĕ тĕреклĕрех пулма тивĕçлĕ.

Анчах кунпа çеç çителĕксĕр-ха. Ялхуçалăхĕн тĕп отраслĕсене аталантарса пынисĕр пуçне, колхозăн ялхуçалăх продукчĕсем туса илсе вĕсене малтанлăха ĕçлесе хатĕрлеме кирлĕ пур «цехсем» те пулмалла, çапла вара колхоз пур ĕçсене те аякран пулăшнисĕрех, хăйĕн вăйĕпех туса тăма пултармалла. Çавăн пек хăйпе уйрăм хуçалăх пулса тăма колхоза чылай хушма хуçалăхсем, тепĕр майлă каласан, подсобнăй предприятисем кирлĕ.

Тĕрлĕ хушма хуçалăхсем колхоз пурнăçĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Час-часах çакăн пек тĕслĕхсене тĕл пулма пулать. Колхоз вăйлă тырпул ӳстерчĕ, вăл тырпула вăхăтра та тирпейлĕ пухса кĕртрĕ. Анчах çулталăк вĕçне çитсен, ĕçкунĕ тăрăх артель çапах та, тырă сахал валеçсе пачĕ. Мĕншĕн? Акă мĕншĕн: колхоза урапа-çунасем кирлĕ пулнă, вăл вĕсене илнĕ те тырăпа тӳленĕ; колхозăн плугсемпе ытти машинăсене юсаттармалла пулнă, çак ĕçсемшĕн те вăл тырă панă; колхоз кирпĕч туяннă, уншăн та тырă панă; катка-пичке илнĕ—уншăн та тырă кайнă; вĕрен-пăяв туяннă—тырă тӳленĕ; темĕн тĕрлĕ ăпăр-тапăрсем илнĕ—пуриншĕн те тырă тăкакланă. Çапла вара колхоз тырри чакнăçемĕн чакса пынă. Ăçтан-ха ĕнтĕ çавăн пек колхоз ĕçкунĕ тăрăх тырă çителĕклĕ таран валеçсе пама пултартăр? Тӳрех калас пулать, кун пек колхозсене ертсе пыракан юлташсем артель тыррине çирĕп тыткалама хăнăхман, вĕсем колхозникĕн ĕçкунĕ хаклăрах пултăр тесе тăрăшмаççĕ, кирлĕ-кирлĕ мар çĕре тырă тăкаклаççĕ. Урапа-çунапа, кирпĕче, катка-пичкене, вĕрен-пăява, тĕрлĕ ăпăр-тапăра колхоз хăйĕн вăйĕпех, хăйĕн килĕнчех тума пултараймасть-и-ха вара? Пултарать, пултармалла та. Çавна тума колхозăн хушма хуçалăхĕсене организацилени тата вĕсен ĕçне тивĕçлипе йĕркелесе яни çеç кирлĕ.

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артельне республикăра лайăх пĕлеççĕ. Çак колхоз çулсеренех тухăçлă тырпул туса илет, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăça кĕртет, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх çителĕклĕ тырă валеçсе парать. Çавăн пек çитĕнӳсем тума колхоза унăн хушма хуçалăхĕсем пысăк пулăшу параççĕ. Ялхуçалăх машинисене юсанăшăн колхоз тырă тӳлемест—унăн хăйĕн тимĕрçĕ лаççи пур; урапа-çуна юсама унăн хăйĕн мастерскойĕсем пур; икĕ çил арманĕ йĕркеллĕ ĕçлесе тăраççĕ; колхоза кирлĕ пулакан ытти япаласене те кунта хăйсемех, аякран пулăшмасăрах, туса хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Е тата Вăрнар районĕнчи «Самолет» колхоза илсе пăхар. Ку колхоз председателĕ Петров юлташ хушма хуçалăхсем пирки акă мĕн калать: «Подсобнăй предприятисем тата ремесло ĕçĕ çук пирки чылай колхозсем тырăпа та, укçан та калама çук пысăк тăкак тăваççĕ... Пирĕн пурте тенĕ пекех хамăрăн пур, мĕн кирлине пурне те эпир хамăр вăйпах тăватпăр». Чăн та, «Самолет» колхозăн хушма хуçалăхĕсем —шыв арманĕ те, кĕрпе арманĕ те, тимĕрçĕ лаççи те,—пĕр чарăнмасăр, йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Колхозăн хăйĕн урапа-çуна тăвакан мастерской тата мастерсем пур: вĕсем 1945 çулта кăна 70 стан урапа тата 50 çуна туса хатĕрленĕ. Артель хăйне валли кирпĕч тăвас ĕçе те организациленĕ: кăçал 28.000 кирпĕч туса кăларнă, килес çулта 60.000 кирпĕчрен кая мар туса кăларма палăртнă. Хурт-хăмăр йышне кунта 270 çемьене çитернĕ. 1946 çулта колхоз Çавал шывĕ çинче гидроэлектростанци лартма хатĕрленет. Çапла ĕнтĕ, ку колхозсен хаклă тырпула перекетлĕн тыткалама кăна мар, тата тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешме те пысăк майсем пур.

Çавăн пек хушма хуçалăхсем организацилесе, вĕсен ĕçне йĕркелесе яма республикăри пур колхозсем те пултараççĕ. Плер, сăмахран, колхозсенче тимĕрçĕ лаççисем усса ĕçе ярас ыйтăвах. Паллă ĕнтĕ, тимĕрçĕ лаççи колхозăн чи кирлĕ хушма хуçалăхĕсенчен пĕри пулса тăрать, унсăр уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыма та май çук. Апла пулин те, çав питех те кирлĕ хуçалăх нумай колхозсенче çук-ха, пуррисем те чылай чухне ăнăçлă ĕçлеймеççĕ. Хăшпĕр колхозсенче тимĕрçĕ лаççисен ĕç хатĕрĕсем çитмеççĕ. Тимĕрçĕсене ялхуçалăх артелĕн Уставĕ хушнă пек мар, уйрăмăн калаçса татăлнă тăрăх тӳлеççĕ. Тимĕрçĕ лаççисем валли кăмрăк туса хатĕрлес ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен. Машинăсене юсанисĕр пуçне, тимĕрçĕ лаççисенче урăх нимĕн те тумаççĕ. Мĕншĕн-ха, сăмахран, тимĕрçĕ лаççисенче колхозпа колхозниксем валли тĕрлĕ ĕç хатĕрĕсем, килте кирлĕ пулакан тимĕр япаласем (ухватсем, алăк хăлăпĕсем, çĕçĕсем, сенĕксем т. ыт. те) туса кăлармалла мар? Çакна тума пулать, тумалла та. Çапла ĕнтĕ, тимĕрçĕ лаççисем усса вĕсен ĕçне йĕркелесе ярасси кашни колхозах пурнăçа кĕртме пултаракан ĕç пулса тăрать.

Колхозсен хушма хуçалăхĕсем хушшинче тĕрлĕ армансем пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсемсĕр колхоз та, колхозниксем те йĕркеллĕ пурăнма пултараймаççĕ. Анчах çапах та юлашки çулсенче республикăра армансен хисепĕ чакрĕ. Хăшпĕр колхозсенче çил арманĕсене пăсса çунтарса янă тĕслĕхсем те пулнă. Ишлей районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз лайăх ĕçлекен шыв арманнех пĕтерсе лартнă. Халĕ ĕçлекен армансем те чылайĕшĕ юхăнса кайнă. Колхозсен тĕрлĕ арманĕсем çине çакăн пек ответсăр, хуçасăрла пăхассине халех пĕтерес пулать. Ку çеç те мар, кашни ял Советĕнчех пĕрер арман та пулин пултăр тесе, çил арманĕсене çĕнĕрен тăвассине вăйлатмалла.

Малта пыракан нумай колхозсем ут таврашĕсене, урапа-çунана юсама тата йывăçран тĕрлĕ ĕç хатĕрĕсем туса кăларма мастерскойсем организациленĕ. Çакăн пек мастерскойсене нимĕнле пысăк тăкаксемсĕрех тата нимĕнле йывăрлăхсăрах тума пулать: вĕсене вырнаçтарма çурт тата вĕсенче ĕçлеме пĕлекен çынсем кăна кирлĕ. Çавăн пек мастерскойсем тупи колхоза та, колхозниксене те çав тери пысăк пулăшу пама пултарать. Çавăнпа та кашни колхозрах ут таврашĕсем юсакан, урапа-çуна тăвакан тата ытти мастерскойсем те уçма тăрăшмалла.

Колхозăн хушма хуçалăхĕсен шутне кӳлĕсемпе пĕвесене те кĕртмелле. Кашни колхозра тенĕ пекех кӳлĕ е пĕве пур, вĕсем выльăхсене шăварма, садсемпе пахчасене шăварма, пулă ĕрчетме май параççĕ. Анчах пур колхозсенче те шывшурсемпе пĕлсе, тухăçлăн усă кураççĕ теме çук-ха. Чылай колхозсенче кӳлĕсемпе пĕвесене юхăнтарса янă, вĕсенче пулă ĕрчетессине организацилемен. Харпăрхăй колхозне пур енĕпе те аталантарса тата тĕреклетсе пырас текенĕн колхоз кӳллисемпе пĕвисем çине тĕ кирлĕ пек çаврăнса пăхмалла.

Вăрçăччен хи вăхăтра нумай колхозсенче тĕрлĕ аласта ĕçĕ вăйланса кайнăччĕ: вĕсенчен хăшпĕрисем—кирпĕч, теприсем—катка-пичкесем, виççĕмĕшĕсем килте кирлĕ пулакан савăт-сапасемпе ытти хатĕрсем туса кăларатчĕç. Халĕ çавăн пек япаласем туса кăларни кирлĕ мар тесен, йăнăш пулнă пулĕччĕ. Пачах урăхла, халĕ вĕсем нумай ытларах кирлĕ. Апла пулсан, çавăн пек япаласем туса кăларас тĕлĕшпе аласта ĕçне колхозсенче пур майсемпе те сарса пымалла.

Юлашкинчен, колхозсенчи гидроэлектростанцисем пирки пĕр-ик сăмах каламалла. Паллă ĕнтĕ, электричество вăйĕпе усă курни халăх хуçалăхĕн ăнăçлăхне татса парать. Пирĕн çĕршывăн промышленноçĕнче электричество вăйĕпе анлăн усă кураççĕ. Колхозсене электричество вăйне кĕртес енĕпе те пирĕн пысăк майсем пур. Малта пыракан ялхуçалăх артелĕсен опычĕ кăтартса панă тăрăх, гидроэлектростанцисем колхозсене йӳне лараççĕ тата ытлашши пысăк тăкаксем тума ыйтмаççĕ. Вĕсемпе усă курни вара уйхир ĕçĕсене чылай хăвăртлатать, ĕç вăйĕпе туртăм вăйне колхоз производстви валли нумай пушатать. Çавăнпа та пĕчĕк шывсем хĕрринче вырнаçнă колхозсенче май пур таран ытларах гидроэлектростанцисем лартма тăрăшмалла.

Пирĕн çĕршыври хресченсем, коллективлă хуçалăхсене пĕрлешсе, хăйсен пурнăçне юсаса пыма пысăк майсем илчĕç. Çав майсенчен пĕри вăл—колхозсен тĕрлĕ хушма хуçалăхĕсене вăйлатса тата нумайлатса пыни пулать.

Çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет

Çыхăну управленийĕ суйлава хатĕрленес ĕçре

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май, Чăваш республикинчи Çыхăну управленийĕ хуласемпе район центрĕсенчи пур участоксенчи суйлав комиссийĕсене те телефон кĕртме палăртнă. Ку ĕçĕн чылай пысăк пайне тунă та ĕнтĕ. Суйлав участокĕсене телефон кĕртме телефон аппарачĕсем чылай илсе килнĕ.

Суйлава хатĕрленнĕ вăхăтра телефонсăр ял Совечĕсене (ун пек ял Совечĕсем республикăра 130 шутланаççĕ) кашни кун уйрăм почтальонсем çӳреççĕ. Кирлĕ вăхăтра вĕсем хăшпĕр суйлав участокĕсемпе ял Совечĕсене кунне виççĕ хут та çитме пултараççĕ. Çав почтальонсене çӳреме лашасем параççĕ.

IV-мĕш кварталти финанс планне пĕшĕмпех тултарар

Укçа-тенкĕ пухмалли плана ăнăçлăн тултарасси финанс работникĕсем мĕнле ĕçленинчен нумай килет. Çакла Красноармейски районри финанс работникĕсен ĕçĕнчен те лайăх курма пулать. IV-мĕш кварталти укçа-тенкĕ пухмалли плана Типçырма, Турхан Упи тата Янкас ял Совечĕсем декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлнех тултарчĕç. Асăннă ял Совечĕсем социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, ку ĕçе ялти пĕтĕм актива мобилизациленĕ. Ялти актив вара ĕçе пуçăнас умĕн чи малтан хăйĕн парăмĕсене парса татнă.

Анчах çав вăхăтрах Ӳсĕк, Çавалçырми, Мартынкасси, Мăн Шетмĕ, Кушар Шетмĕ ял Совечĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе чăтма çук юлса пыраççĕ. Асăннă ял Совечĕсен председателĕсемпе налог агенчĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе нимĕнле ответлăха та туймаççĕ. Вĕсем ку ĕçе тума актива явăçтарман. Уйрăмах колхозсенчен подоходнăй налогпа страховка укçине пухас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Районри 88 колхозран подоходнăй налог пухас тĕлĕшпе 59 колхоз, страховка укçи пухас тĕлĕшпе 58 колхоз кăна плана тултарнă. «Новый мир», «Унгастрой» колхозсем ку тĕлĕшпе района каялла туртса пыраççĕ. Единоличниксенчен укçа-тенкĕ пухас ĕçе те ырламаллах мар. Укçа-тенкĕ парас ĕçе юри чăрмантарса пыракансене ял Совечĕсем ответ тыттарма шутламаççĕ.

Чылай ял Совечĕсемпе колхозсенче страховани ĕçне тивĕçлĕ хак памаççĕ. Çавна пула колхоз пурлăхне, обществăллă выльăх-чĕрлĕхе, акнă тырпула тата ыттисене те прĕклĕн страхлас ĕçе организацилемен.

Финанс планне тултарас ĕçре суту-илӳ нумай пулăшать. Анчах райпотребсоюз системинче кĕрекен суту-илӳ организацийĕсем IV-мĕш кварталти таварçаврăнăш планне декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 50 процент кăна тултарнă.

Районри промышленность предприятийĕсемпе артельсем куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ пирки тата суту-илӳ организацийĕсем япăх ĕçленĕ пирки район 1945 çулхи бюджета тултарас тĕлĕшпе юлса пырать.

Бюджета тултарас пулсан, финанс планне пĕтĕмпех тултармалла. Çавăнпа та районри финанс работникĕсен укçа-тенкĕ пухас ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла.

Г. ТОМАСОВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕМ ЮСАМАЛЛИ IV-мĕш КВАРТАЛТИ ПЛАНА ДЕКАБРĔН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

МТС-сем	Тракторсем юсанă
1. Красноармейски	166,6
2. Йĕпреç	113,3
3. Чкаловски	105,2
4. Шăхасан	100,0
5. Елчĕк	100,0
6. Комсомольски	80,0
7. Ишлей	78,9
8. Вăрнар	70,5
9. Элĕк	66,6
10. Калинино	66,6
11. Октябрьски	66,6
12. Çĕрпӳ	64,2
13. Сĕнтĕрвăрри	60,0
14. Улатăр	54,5
15. Сĕнтĕр	53,3
16. Куславкка	50,0
17. Шупашкар	46,1
18. Канаш	45,4
19. Пăрачкав	31,5
20. Сурмайдан	28,5
21. Тăвай	25,0
22. Первомайски	22,2
23. Вăрмар	20,0
24. Кувакино	10,0
25. Спява	10,0
26. Хĕрлĕ Чутай	—
27. Шăмăршă	—
28. Сĕнтĕрле	—
29. Етĕрне	—

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 555-мĕш Шупашкар суйлав округĕнче

Округри суйлав комиссин председателĕпе А. Д. Кăлкан юлташпа калаçнинчен

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 555-мĕш Шупашкар суйлав округне,—тет Кăлкан юлташ,—Шупашкар хули, Сĕнтĕр тата Ишлей районĕсем кĕреççĕ. Округра мĕн пурĕ 73 участок туса хунă. Округри комиссин пирвайхи ларăвĕ декабрĕн 2-мĕшĕнче пулса иртнĕ. Çав ларура округри суйлав комиссийĕн ĕç планне пăхса тухса çирĕплетнĕ.

Округри комиссин декабрĕн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларăвĕнче суйлав комиссин членĕсене суйлав участокĕсем çумне çирĕплетес ыйтăва сӳтсе-явнă. Округри суйлав комисси членĕсене пурне те участоксенчи комиссисем çумне çирĕплетнĕ. Округри суйлав комиссийĕн членĕсем СССР Верховный Советне суйламалли Положение тĕплĕн вĕреннĕ.

Декабрĕн 15-мĕшĕнче округри комиссин ларăвĕ пулса иртнĕ. Ку ларура суйлав участокĕсене номерсем панă тата вĕсен ячĕсене çирĕплетнĕ. Декабрĕн 16-мĕшĕнче округри суйлав комиссийĕн членĕсене суйлав документчĕсемпе паллаштарас шутпа ятарласа канашлу туса ирттернĕ.

Суйлав округне кĕрекен участоксенчи суйлав комиссисен составне çирĕплетнĕ хыççăн, хулара тата округа кĕрекен районсенче участоксенчи комиссисен председателĕсемпе секретарĕсене пухса канашлусем туса ирттернĕ. Шупашкарта çавăн пек канашлу декабрĕн 18-мĕшĕнче пулса иртнĕ, Ишлейре — декабрĕн 19-мĕшĕнче тата Сĕнтĕрте — декабрĕн 20-мĕшĕнче пулса иртнĕ. Шупашкарта пулса иртнĕ участоксенчи комиссисен председателĕсемпе секретарĕсен канашлăвĕнче ВКП(б) горкомĕн секретарĕ Ислюков юлташ, хула Совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ сăмахсем туха каланă. Районсенчи канашлусенче те çавăн пекех райком секретарĕсемпе райсовет исполкомĕсен председателĕсем пулнă.

Округри суйлав комиссин декабрĕн 28-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларăвĕнче Ишлей районĕнчи Вăрман Сĕктер суйлав участокĕ суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе епле ĕçлени çинчен сӳтсе-явнă. Ку ыйтупа ял Совет исполкомĕн председателĕ Журавлев юлташ тата участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Я. Васильев юлташ доклад туса панă.

Малтанхи вăхăтра Вăрман Сĕктер участокĕнчи суйлав комиссийĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем палăрнă пулсан, хальхи вăхăтра ку участокра ĕç лайăхланса пырать. Суйлавçăсен списокне тунă чухне Чебоктăп подсобнăй хуçалăхĕнче ĕçлекенсене суйлавçăсен списокне кĕртмесĕрех хăварнă пулнă. Халĕ кунта суйлав участокĕн пӳлĕмне йĕркелеççĕ, суйлавçăсен списокне туса пĕтереççĕ. Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне кунта суйлав ирттермелли пӳлĕме пĕтĕмпех йĕркелесе çитерме, суйлава хатĕрленессипе çыхăнса тăракан ытти ĕççене пурне те тума пулчĕç.

Шупашкар хулинче суйлавçăсен списокне тăвас ĕçе вĕçленĕ, халĕ списоксене машинкăпа çапаççĕ. Участокри суйлав комиссийĕсем пурте ĕçе тытăннă. Пуринчен ытла хулари 6-мĕш участок комиссийĕ (председателĕ Рябушкина юлташ), Уполнаркомзаг çуртĕнче вырнаçнă 7-мĕш участок (председателĕ Демидов юлташ) лайăх ĕçлеççĕ. Кунта суйлав ирттермелли пӳлĕмсене лайăх йĕркеленĕ.

Хулари пожарнăй команда клубĕнче вырнаçнă 12-мĕш участок халĕ те участок пӳлĕмĕсене çителĕклĕ йĕркелемен. Клубра сивĕ, пӳлĕмсене халь çеç юсама тапратнă. Хулари суйлав участокĕсенче пуринче те телефонсем тата радио пур, районсенче кăна хăшпĕр участоксенче телефонсем çук.

— Участоксем вырнаçнă учрежденисемпе вĕсен руководителĕсем çине тăрса тăрăшнă çĕрте участокри суйлав комиссийĕсене ĕçлеме пур кирлĕ условисене те туса панă,—тет Кăлкан юлташ.

Хирпуç ял Совечĕ суйлав умĕн

Вăрнар районĕнчи Хирпуç ял Совечĕ районра малта пыракан ял Совечĕ шутланать. Ял Совет исполкомĕ çирĕп план тăрăх ĕçлет.

Кунта ял Совет исполкомĕн председателĕ пулса Отечественнăй вăрçă инваличĕ П. Николаев юлташ ĕçлет. Николаев юлташ ял Совечĕн мĕнпур ĕçĕсене актив çине таянса туса пырать.

Ял Совечĕн ялан ĕçлекен 6 комисси пур. Ял Совет депутачĕсем çав комиссисем урлă ĕçе туса пыраççĕ. Депутатсемсĕр пуçне, ялан ĕçлекен комиссисене ялти актива 27 çынна явăçтарнă. Кунта учительсем, коммунистсем, комсомолецсем, малта пыракан колхозниксем тăраççĕ.

«Ĕçри хастарлăхшăн» медаль илнĕ депутат П. Андреев темиçе çул хушши ĕнтĕ «Çĕнтерӳ» колхоза ертсе пырать. Вăл ертсе пыракан колхоз—районра малта пыракан колхозсенчен пĕри. П. Печников депутат колхоз счетовочĕ пулса ĕçленĕ, çав вăхăтрах колхозăн 8 гектарлă садне хывса хăварас ĕçе пуçаракан пулнă. Г. Филиппов депутат Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тăшмана хирĕç кĕрешнĕ, фронтра хастарлăн çапăçнăшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илнĕ. Демобилизаци йĕркипе киле таврăнсанах ăна «Кĕçĕн Çавал» колхозăн председателĕ пулса ĕçлеме суйласа лартнă. Халĕ вăл кĕске вăхăтрах колхоза, унччен юлса пынăскерне, мала тухма пулăшрĕ. А. Ильина, Г. Дмитриев, П. Филимонова депутатсем те колхоз производствинче ырми-канми ĕçлеççĕ.

Ял Совет исполкомĕ хăйĕн территоринчи колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерессишĕн куллен тăрăшать. Çуракине хатĕрленсе ирттересси, çум çумласси, утă çулса пухасси, уборкăна хатĕрленсе ирттересси, государствăна тырăпа ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçласси,—çак ыйтусем ял Совечĕн кун йĕркинчен тухман. Ял Совечĕ социализмлă ăмăртура колхозсем илнĕ обязательствăсене епле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăнă. «Çĕнтерӳ» колхоз 670 гектар тырпула сентябрĕн 5-мĕшĕнче, «Кĕçĕн Çавал» колхоз 370 гектар тырпула сентябрĕн 9-мĕшĕнче пĕтĕмпех вырса пĕтернĕ. Çав колхозсем техникăллă культурăсене сентябрĕн 16—21-мĕшĕсенче, вăрлăхлăх куракăсене сентябрĕн 18-мĕшĕнче, çĕрулмине октябрĕн 19-мĕшĕнче пухса кĕртнĕ, октябрĕн 6—16-мĕшĕсенче кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ, октябрĕн 10-мĕшĕнче тата ноябрĕн 5-мĕшĕнче авăн çапса пĕтернĕ, августăн 26—27-мĕшĕсенче кĕрхи тырă акса пĕтернĕ. «Çĕнтерӳ» колхоз планран ирттерсе 4 гектар акса хăварнă. Кунта тырпул тухăçлăхĕ те начар мар. «Çĕнтерӳ» колхоз тĕштырăсем вăтам шутпа гектартан 16,8 центнер, «Кĕçĕн Çавал» колхоз 11,2 центнер пухса илнĕ.

Ял Советĕнчи икĕ колхоз та государствăна тырă памалли обязательствăна сентябрĕн 28-мĕшĕнче пурнăçа кĕртнĕ. «Çĕнтерӳ» колхоз планран ирттерсе Хĕрлĕ Сар фондне 1.600 пăт тырă панă.

Ял Совечĕ тăрăшнипе Хирпуç ялĕнче кăçал 7 çул вĕренмелли шкул уçнă. Шкул çурчĕсене вĕренӳ çулне вăхăтра хатĕрлесе çитернĕ, вутă хатĕрлесе кӳрсе панă. Халĕ колхозниксем çĕнĕрен уçнă 7 çул вĕренмелли шкулăн çуртне тума йывăç касса хатĕрлеççĕ. Ял Советĕнчи икĕ ялта та шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕрентĕве явăçтарнă. Ялта вулав çурчĕ пур. Унăн заведующийĕ Г. Спиридонов лайăх ĕçлет. Вулав çуртĕнче таса, пӳлĕме чечексемпе илемлетнĕ, плакатсемпе лозунгсем çыпăçтарнă. Библиотекăра 300 яхăн тĕрлĕ кĕнеке пур. Вулав çуртĕнче каççенех калаçусемпе докладсем пулаççĕ, ушкăнпа хаçат вулаççĕ.

Çар çыннисен çемьисене, вăрçă инваличĕсене тата демобилизаци шучĕпе киле таврăнакан воинсене пулăшас тĕлĕшпе кунта уйрăм комисси тунă. Ял Советĕнчи вăрçă инваличĕсене пурне те ĕçе вырнаçтарнă. Çар çыннисене 6 çынна вутă тата стройматериалсем панă.

Ял Совечĕ 1945 çулта çулйĕр строительстви тĕлĕшпе те лайăх ĕçлесе пычĕ. Савна пула «Çĕнтерӳ» колхоз та, «Кĕçĕн Çавал» колхоз та хăйсен çулйĕр ĕçĕсен планне ытлашшипех пурнăçланă. Вăл колхозсем хăйсем çумне çирĕплетнĕ участоксенчи çул-йĕрсене яланах лайăх тытаççĕ. Ял хушшинчи çулсемпе кĕперсене те юсасах тăраççĕ.

Ял Совет исполкомĕн председателĕ П. Николаевпа налог агенчĕ А. Борисова тата ялан ĕçлекен комиссинчи актив тăрăшса ĕçленипе пула, ял Совечĕ 1945 çул тăршшĕнех финанс планне кварталтан квартала ытлашшипех тултарса пырать. Финанс планне 1-мĕш кварталта 169 процент, II-мĕш кварталта — 120 процент, III-мĕш кварталта—113,9 процент, IV-мĕш квартал планне срокчен 139 процент тултарнă. Финанс планне вăхăтра тултарса пынă май ял Совечĕ хăйĕн ĕçне куллен лайăхлатса пырать. Кунта суйлавçăсен списокне туса хатĕрленĕ, участокри суйлав комиссин çуртне хатĕрлесе йĕркене кĕртнĕ. Вулав çурчĕ кунта халĕ агитпункт пулса тăчĕ.

Ку ял Советĕнчи колхозсем СССР Верховный Советне суйламалли кун тĕлне суракине хатĕрленес [illegible] хатĕрлемелли плана [illegible] ĕçлеççĕ.

Е. ЗОЛКОВ.

Бирнс Мускавран кайни

Декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 27-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Д. Бирнс господин Мускавран тухса кайнă. Д. Бирнс господинпа пĕрле çаксем кайнă: Государство департаменчĕн Советникĕ В. Коэн господин, Гарвардри университетăн ректорĕ Д. Конант доктор, Государство департаменчĕн ответлă сотрудникĕсем—Х. Метьюз, Д. Картер Винсент, Ч. Болен господинсем тата ыттисем те.

Центральнăй аэродромра Д. Бирнс господина çаксем ăсатса янă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем С. К. Царапкин, А. Я. Малик, Ф. Ф. Молочков, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Мускаври Посольствин членĕсем хăйсене ертсе пыракан Посолпа А. Гарриман господинпа пĕрле тата Китай Посолĕ Фу-Бин-чан господин.

Аэродрома США-н тата Совет Союзĕн ялавĕсене çакса илемлетнĕ.

Бирнс господин калани

Аэродромра Бирнс господин микрофон умĕнче çапла каланă:

«Эпĕ çапла шутлатăп: Конференци çав тери пултаруллă иртрĕ. Унăн усси эпир кунта калаçса татăлнинче çеç мар, вăл тата хальхи туслă çыхăнусем малашне сӳтсе-явмалли ыйтусене татса пама пулăшассинче пулать», тенĕ.

Бевин господин Мускавран кайни

Декабрĕн 28-мĕшĕнче Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Э. Бевин господин Мускавран тухса кайнă. Э. Бевин господинпа пĕрле çаксем кайнă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Яланхи Заместителĕ А. Кадоган господин, Британин Иранри Посолĕ Р. Буллард господин тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин ответлă сотрудникĕсем — Р. Кемпбелл, Д. Стерндейл Беннет господинсем.

Центральнăй аэродромра Э. Бевин господина çаксем ăсатса янă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, Совет Союзĕн Великобританири Посолĕ Ф. Т. Гусев, СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем—Ф. Ф. Молочков, В. Я. Ерофеев, В. Г. Трухановский, Великобританин Мускаври Посольствин членĕсем хăйсене ертсе пыракан Посолпа А. Керр господинпа пĕрле, Китай Посолĕ Фу-Бин-чан господин, Франци Посолĕ Ж. Катру генерал, Австрали Посланникĕ Д. Малоней господин, Çĕнĕ Зеланди Посланникĕ Ч. Босвелл господин, Канадăн Ĕçри Поверенăйĕ Л. Мейранд господин.

Аэродрома Британипе Совет Союзĕн ялавĕсене çакса илемлетнĕ.

Бевин господин калани

Великобританице вĕçсе каяс умĕн Бевин господин аэродромра микрофон умĕнче çапла каланă:

«Мускавра çав тери лайăх пурăннă хыççăн эпĕ халĕ Великобритание таврăнма хатĕрленетĕп. Мускавра эпир пĕр-пĕрне хамăр шухăшсене пĕлтерме пултартăмăр, нумай ыйтусем тăрăх калаçса татăлтăмăр.

Эпĕ ĕнтĕ çакна лайăх шанса тăма пултаратăп: пирĕн çав конференци пирĕн хамăр çĕршывсемшĕн кăна мар, пĕтĕм тĕнчешĕн усăллă пулĕ.

Эпĕ кунтан нумайĕшпе тав тумасăр тухса кайма пултараймастăп, пуринчен малтан Совет правительствине, министрсене тата пире Мускавра лайăх пурăнма пулăшнă çынсене пурне те тав тăватăп, вĕсем пире Мускавра питĕ ăшшăн хăналарĕç.

Пĕтĕм совет халăхне пысăк салам, сывă пулăр!»

А. Я. Вышинский юлташ, А. Гарриман господин, А. Керр господин Бухареста тухса кайни

Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Мускаври канашлăвĕ йышăннă тăрăх, ĕнер, декабрĕн 28-мĕшĕнче, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи Посолĕ А. Гарриман тата Великобританин Посолĕ А. Керр Мускавран Бухареста тухса кайнă.

Вĕсемпе пĕр вăхăтрах Бухареста тата çаксем тухса кайнă: Совет Союзĕн Румынири Посолĕ С. И. Кавтарадзе тата Румынин Совет Союзĕнчи Посолĕ Я. Пордан господин. (ТАСС).

«Эстони литературин антологийĕ»

ТАЛЛИН, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Вырăссене совет Эстонийĕнчи поэтсен творчествипе паллаштарас шутпа Ленинградри поэтсем пуçарнипе, «Эстони поэзийĕн антологине» пичетлесе кăларма хатĕрленеççĕ.

Сютисте, Марта Раул, Ян Кярнер, поэт-комсомолец Ральф Парве çырнă произведенийĕсене Всеволод Азаров куçарать. Ленинградра Ю. Сютистен суйласа илнĕ сăввисен кĕнеки тухать.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

ПУРĂНМАЛЛИ ÇУРТЙĔР ТАТА КОММУНАЛЬНĂЙ ХУÇАЛĂХ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕН НОЯБРЬ УЙĂХĔНЧИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Совнаркомĕ пурăнмалли çуртйĕр тата коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, кăçалхи ноябрь уйăхĕнче Шупашкар хулинчи канализаци (заведующийĕ Цветков юлташ) мала тухнине палăртнă. Шупашкар хулинчи канализацие ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 2.000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Кăçалхи ноябрь уйăхĕнче Канашри колхозник çурчĕ, Канашри канализаци обозĕ тата Улатăрти гостиница лайăх ĕçленине палăртнă.

Орел, Брянск тата Бобруйск облаçĕсенче нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тунӑ тискер ĕçсемшĕн суд туни

Декабрĕн 26-мĕшĕнче Брянскра Округри Çар Трибуналĕ Германи çарĕнчи çар çыннисен ушкӑнне суд тума пуçланӑ. Вĕсене 1941—1944 çулсенче Орел, Брянск тата Бобруйск облаçĕсенче граждансла халӑхпа тыткӑнра лекнĕ красноармеецсене массӑллӑн асаплантарнӑшӑн тата вĕлернĕшĕн, ялсемпе хуласене çаратса аркатса тӑкнӑшӑн айӑплаççĕ.

Суд умĕнче тӑватӑ çынна: Германи çарĕн генерал-лейтенантне Фридрих-Густав Бернгардпа, вӑл 2-мĕш танковӑй, унтан 9-мĕш пехотнӑй армин тылри округĕн командующийĕ пулнӑ; Германи çарĕн генералне Адольф Гаманна, вӑл Орел, Брянск тата Бобруйск хулисен коменданчĕ пулнӑ, çавӑнпа пĕр вӑхӑтрах Орелри административлӑ округӑн командующийĕ пулнӑ, унтан вара Бобруйскри тĕреклетнĕ районӑн командующийĕ пулнӑ; Карл-Теодор Штайна тата Мартин-Адольф Лемлера — Германи çарĕн çар çыннийĕсене ответ тыттараççĕ.

Ĕçе Çар Трибуналĕн уçӑ ларӑвĕнче пӑхса тухаççĕ. Суд председателĕ—юстици генерал-майорĕ Микляев юлташ тата Трибунал членĕсем—юстици полковникĕ Хряков юлташпа юстици подполковникĕ Кипарисов юлташ. Государство енчен юстици гварди подполковникĕ Максимов юлташ айӑплать. Айӑпланакансене Миловидов, Долгополов тата Коваленко адвокатсем хӳтĕлеççĕ.

Айӑпласа çырнинче кӑтартнӑ тӑрӑх, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Орел, Брянск тата Бобруйск облаçĕсенче мирлĕ халӑха тискеррĕн асаплантарнӑ, совет гражданĕсене, вӑл шутра ача-пӑчасемпе старриксене те вĕлернĕ, хуласемпе ялсене, культурӑпа çутĕç учрежденийĕсене, промышленность предприятийĕсене çаратса, нимĕн хĕрхенӳсĕр аркатса тӑкнӑ.

Следстви туса çакна палӑртнӑ: Орел, Брянск тата Бобруйск облаçĕсенче çакӑн пек тискер ĕçсем тунӑшӑн нимĕçсен фашистла ытти преступникĕсемпе пĕрлех Германи çарĕн генерал-лейтенанчĕ Фридрих-Густав Бернгардпа Германи çарĕн генерал-майорĕ Адольф Гаманн айӑплӑ.

Германи çарĕн верховнӑй командованийĕн пĕтĕмĕшле планĕсемпе кӑтартӑвĕсем тӑрӑх ĕçлесе, вĕсем çав асӑннӑ облаçсенче гитлерла «çĕнĕ йĕрке», урӑхла каласан, совет халӑхне вĕлермелли, пусмӑрласа çаратмалли йĕрке тӑвас ĕçе ертсе пынӑ.

Çавӑн пек тискер ĕçсене 299-мĕш пехотнӑй дивизин 529-мĕш пехотнӑй полкĕнчи обер-ефрейтор Карл Штайн тата 211-мĕш стрелковӑй дивизин 134-мĕш пехотнӑй полкĕнчи ефрейтор Мартин Лемлер пурнӑçа кĕртме активлӑн хутшӑннӑ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсен тискер ĕçĕсене тĕпчесе палӑртас тĕлĕшпе ĕçлекен Государствӑн Чрезвычайнӑй Комиссийĕн нумай документĕсем тӑрӑх, экспертизӑн акчĕсем тӑрӑх тата свидетельсемпе айӑпланакансем калаçа панӑ тӑрӑх, çакна палӑртнӑ: Германи çарĕн генералĕсем Бернгардпа Гаманн нимĕçсем оккупациленĕ Орел, Брянск тата Бобруйск облаçĕсенче совет халӑхне валли çав тери тискер режим туса хунӑ, совет гражданĕсене чӑтма çук асаплантарнӑ.

Айӑпланакансем Бернгардпа Гаманн панӑ распоряженисемпе кӑтартусем тӑрӑх, Германи çарĕн çар çыннийĕсем мирлĕ совет гражданĕсемпе тыткӑнри совет çар çыннийĕсене çав тери тискеррĕн асаплантарнӑ тата вĕлернĕ.

Орелпа Брянск облаçĕсене оккупациленĕ вӑхӑтра нимĕçсен фашистла захватчикĕсем мирлĕ совет гражданĕсене 90.000 çынна вĕлернĕ, вӑл шута 4.565 ача кĕрет. Кунсӑр пуçне, вĕсем лагерьсенче 56.000 совет çар çыннине асаплантарса вĕлернĕ.

Бобруйск облаçĕнче нимĕç оккупанчĕсем совет гражданĕсене 40.000 çынна яхӑн тата тыткӑнри совет çар çыннисене 40.000 çынна яхӑн персе пӑрахнӑ е асаплантарса вĕлернĕ.

Следстви туса çакна палӑртнӑ: совет гражданĕсене хупса усрамалли лагерьсенче нимĕç захватчикĕсем совет çыннисене выçӑхтарса усранӑ, сивĕ, пурӑнма пачах та юрӑхсӑр бараксенче санитари тĕлĕшĕнчен чи киревсĕр условисенче тытса усранӑ. Çакна пула лагерьсенче ларакан çынсем массӑллӑн ерекен чирчĕрпе чирленĕ тата вилсе пĕтнĕ.

Совет гражданĕсене асаплантарса вĕлернисĕр пуçне, айӑпланакансем Бернгардпа Гаманн ертсе пынӑ нимĕçсен çар чаçĕсем совет çыннисене ирĕксĕрлесе Германие чуралӑха хӑваласа кайнӑ.

Государствӑн Чрезвычайнӑй Комиссийĕн акчĕсенче тата ытти тĕрлĕ документсенче çакна кӑтартса панӑ: нимĕç чуралӑхне каясшӑн пӑрӑнса юлма хӑтланнӑшӑн фашистла тискер каййӑксем ялĕ-ялĕпе çунтарса янӑ, тытнӑ çынсене вара тискеррĕн вĕлернĕ. Нимĕç генералĕсем Бернгардпа Гаманн ертсе пыракан çарсем тата нимĕç çарĕн ытти чаçĕсем Орел, Брянск тата Бобруйск облаçĕсенчен нимĕç чуралӑхне 217.859 çын хӑваласа кайнӑ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем вырӑссен авалхи хулине — Орела, Брянск, Бобруйск, Карачев, Жиздра хулисене тата çав облаçсенчи ытти хуласемпе ялсене пĕтĕмпех тенĕ пек çаратса, аркатса хӑварнӑ.

Çак ĕçсене пурне те план тӑрӑх туса пынӑ. Заводсене, фабрикӑсене, больницӑсене, санаторисене, шкулсемпе музейсене пĕтерсе тӑкма малтанах палӑртса хунӑ.

Государствӑн Чрезвычайнӑй Комиссийĕ палӑртнӑ тӑрӑх, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене, колхозсемпе уйрӑм граждансене Орел облаçĕнче нумай миллиард тенкĕлĕх, Брянск облаçĕнче (туллимар даннӑйсем тӑрӑх)—22 миллиард тенкĕлĕх ытла, Бобруйск облаçĕнче — 7 миллиард тенкĕлĕх ытла сиен кӳнĕ.

Айӑпланакансем Штайнпа Лемлер хӑйсен айӑпĕсене пĕтĕмпех йышӑннӑ. Гаманн Бобруйскри мирлĕ халӑха оборона сооруженийĕсене тума мобилизациленĕ приказ панине кӑна йышӑннӑ. Эпĕ хамӑн начальство хушнине çеç пурнӑçа кĕртнĕ. Гаагӑра алӑ пуснӑ пĕтĕм тĕнчери конвенцие пӑсакан нимле преступлени те туман, тенĕ вӑл. Айӑпланакан Бернгард концентрациллĕ лагерьсенче хаяр режим тунӑшӑн, мирлĕ граждансене уйхпре минӑсенчен тасатма мобилизациленĕшĕн тата мирлĕ халӑха Германие илсе кайнӑшӑн айӑплӑ пулнине йышӑннӑ.

Айӑпласа çырнине вуласа панӑ хыççӑн суд айӑпланакансенчен ыйтса пĕлме тытӑннӑ.

Нимĕç фашисчĕсене Ленинград облаçĕнче тунӑ тискер ĕçсемшĕн суд туни

ЛЕНИНГРАД, декабрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кунта Ленинград çар округĕн Çар трибуналĕ Германи çарĕнче службӑра тӑнӑ çынсен пĕр ушкӑнĕн ĕçне пӑхса тухма тытӑннӑ. Вĕсене нимĕçсем Ленинград облаçĕн территорине вӑхӑтлӑха оккупациленĕ вӑхӑтра Совет Союзĕн мирлĕ гражданĕсене йышлӑн вĕлернĕшĕн, асаплантарнӑшӑн тата нимĕç чуралӑхне хӑваласа кайнӑшӑн, вӑрӑ-хурахла ĕçсем тунӑшӑн, хуласемпе ялсене тискеррĕн аркатса пĕтернĕшĕн тата ытти тĕрлĕ киревсĕр ĕçсем тунӑшӑн айӑплаççĕ.

Пурĕ 11 çынна айӑплаççĕ: Германи çарĕн генерал-майорне Генрих Ремлингера, Германи çарĕн капитанне Карл-Герман Штрюфинга, старши лейтенанта Франц Визене, лейтенанта Эдуард Зоненфельда, Германи çарĕнче службӑра тӑнӑ Фриц Энгеле, Арно Дюрене, Эрнст Бема, Эрвин Герера, Эрвин Скотние, Гергард Яникене, Эрих-Пауль Фогеле.

Çак ĕçе судӑн уçӑ ларӑвĕнче пӑхса тухаççĕ. Суд председателĕ—юстици генерал-майорĕ Исаенков юлташ, трибунал членĕсем — юстици подполковникĕсем Комлев тата Петров юлташсем; государство айӑплаканĕ—юстици генерал-майорĕ Петровский юлташ; айӑпланакансене хӳтĕлекенсем—суд çирĕплетсе панӑ адвокатсем Зимин, Галебский, Берхов, Кроленко, Волков юлташсем.

Ирхи ларура айӑпласа çырнине вуласа панӑ. Айӑпласа çырнинче çапла каланӑ: Ленинград облаçĕнче нимĕç фашисчĕсем оккупациленĕ районсенче мирлĕ совет гражданĕсене, вӑл шутра хĕрарӑмсене, ватӑ çынсене тата ачасене, вĕлерсе çӳренĕ, совет çыннисене нимĕç чуралӑхне хӑвала-хӑвала кайнӑ, совет хулисемпе ялĕсене ишĕлтернĕ, пĕтере-пĕтере лартнӑ, çав районсенчи пурлӑха çаратнӑ.

Следстви çакна палӑртнӑ: нимĕç палачĕсем 52.355 çынна персе, çакса вĕлернĕ, çунтарса янӑ тата тĕрмесемпе лагерьсенче асаплантарса вĕлернĕ.

Ленинград облаçне оккупацилесе тӑнӑ тапхӑрта нимĕç фашисчĕсем, персе вĕлерессипе хӑратса, мирлĕ совет гражданĕсене 404.230 çынна ирĕксĕрлесе нимĕç чуралӑхне хӑваласа кайнӑ.

Ленинград облаçне фашистсем пĕтĕмĕшпех аркатса тӑкмалли облаçсен шутне кĕртнĕ. Ленинград облаçĕнче хӑйсем «хуçаланса» пурӑннӑ вӑхӑтра нимĕçсен фашистла захватчикĕсем 20 хулана, 3.135 яла пĕтĕмĕшпех аркатса тӑкнӑ е пысӑк сиен кӳнĕ.

Ленинград облаçĕнче нимĕçсем 152.338 çурта, 3.783 промышленность предприятине, 1.933 шкула, чир-чĕртен сыватмалли 256 учреждение, ачасен 235 çуртне, сачĕсемпе яслисене, 1.019 театра, кино-театра, клубсене, хĕрлĕ кĕтессемпе музейсене, 795 магазина тата ытти нумай çуртсемпе сооруженисене çунтарса янӑ, çĕмĕрсе тӑкнӑ тата пысӑк сиен кӳнĕ.

Нимĕçсем вӑхӑтлӑха оккупациленĕ вырӑнти чаплӑ дворецсемпе парксене — Ленинград çывӑхĕнчи Гатчинӑпа, Павловска, Пушкин хулине, Петергофа тата ыттисене те тискеррĕн çĕмĕрсе тӑкнӑ, çунтарса янӑ, тата çаратса пĕтернĕ.

Нимĕç захватчикĕсем вырӑссен авалхи хулине Новгорода пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тӑкнӑ, çунтарса янӑ унта пурӑнмалли 2.346 çуртран 40 çурт кӑна юлнӑ.

Вырӑссен авалхи Псков хулине те тĕппипех çĕмĕрсе тӑкнӑ. Культурӑллӑ учрежденисене, промышленность предприятийĕсене, памятниксене, музейсене тата авалхи соборсемпе чиркӳсене аркатса тӑкнӑ, çунтарса янӑ тата вĕсен пурлӑхĕсене вӑрласа пĕтернĕ.

Гитлеровецсем облаçри колхозсен хуçалӑхĕсене питех те пысӑк сиен кӳнĕ.

Нимĕç захватчикĕсем тунӑ преступленисем—вӑрçӑ законĕсемпе йӑлисене (вĕсене тĕнчери конвенцисенче кӑтартса панӑ) тата пурте йышӑннӑ право нормисене киревсĕр пӑсни пулса тӑраççĕ. Çак преступленисене Германи çарĕн офицерĕсемпе салтакĕсем тунӑ.

Çак ĕç тӑрӑх Германи çарĕнче службӑра тӑнӑ 11 çынна айӑплаççĕ. Айӑпланакансем çаксем: генерал-майор Генрих Ремлингер, капитан Карл Штрюфинг, обер-фельдфебель Фриц Энгель, çар службинче тӑнӑ Арно Дюре, взвод командирĕ Эрнст Бем, лейтенант Эдуард Зоненфельд, çар службинче тӑнӑ Эрвин Герер, Эрвин Скотни тата Гергард Янике, обер-фельдфебель Эрих-Пауль Фогель, старши лейтенант Франц Визе.

Следстви çакна палӑртнӑ: совет гражданĕсене йышлӑн асаплантарса вĕлерес тĕлĕшпе, çавӑн пекех тата Ленинград облаçĕнче оккупациленĕ хуласемпе ялсене çĕмĕрес тата çаратас тĕлĕшпе нимĕç çарĕн комендатурисенчи служащисем тата ятарласа тунӑ отрячĕсенчи çынсем уйрӑмах тискер ĕçсем тунӑ.

Айӑпланакан Ремлингер, 1944 çулта хула коменданчĕ пулса тӑрса, çакӑнпа пĕр вӑхӑтрах хӑйне пӑхӑнса тӑракан районсенчи комендатурӑсене тата ятарласа тунӑ отрядсене ертсе пыраканĕ пулса, совет гражданĕсене йышлӑн вĕлерсе пĕтерес, асаплантарас, нимĕç чуралӑхне хӑваласа каяс ĕçе, çавӑн пекех тата Ленинград облаçĕнчи хуласемпе ялсене аркатса çĕмĕрес ĕçе хутшӑннӑ.

Айӑпласа çырнӑ актра Германи çарĕнче çар службинче тӑнӑ çак çынсен конкретнӑй преступленийĕсене кӑтартнӑ.

Юлашкинчен çакна кӑтартса панӑ: айӑпланакансем Штрюфинг, Бем, Фогель, Энгель, Зоненфельд, Янике, Скотни, Герер тата Дюре хӑйсене айӑплӑ тесе йышӑннӑ, хӑйсен преступниклĕ ĕçĕсем çинчен тĕплĕн калаçа панӑ.

Ремлингер вара хӑйне айӑплӑ тесе йышӑнман, анчах та вӑл пĕр айӑпсӑр совет гражданĕсене хирĕç юнлӑ ĕçсем тунине, совет ялĕсене çунтара-çунтара янине, вуншар пин совет гражданне нимĕç каторгине илсе кайнине çак ĕçпе айӑпланакан çынсем, свидетельсем тата Государствӑн Чрезвычайнӑй Комиссийĕ çырнӑ актсем кӑтартса параççĕ.

Çавӑн пекех айӑпланакан Визе те хӑйне айӑплӑ тесе шутламасть.

Айӑпласа çырнине вуласа панӑ хыççӑн суд айӑпланакансене допрос тума тытӑнать. Айӑпланакансем пурте, Визепе Ремлингерсӑр пуçне, хӑйсен айӑпне йышӑнаççĕ.

Пуринчен малтан айӑпланакан Бем калаçа парать.

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче вӑл хӑйне уйрӑм взводӑн командирĕ пулнӑ, совет çыннисене фашистла каторгӑна хӑвала-хӑвала кайнӑ, ялсене çунтарнӑ, мирлĕ пурӑнакан çынсене çаратнӑ тата вĕлернĕ. Хӑйĕн айӑпне пĕчĕклетес тесе, вӑл çапла калать: çавӑн пек ĕçсене манӑн взвод, ытти чаçсем пекех, «хӑйсен командирĕсем хушнипе» тунӑ, тет.

Анчах вӑл çакна йышӑнать: хӑйĕн взвочĕпе пĕрле вӑл вунӑ ялтан кая мар çунтарса янӑ, çав ялсенче мирлĕ пурӑнакан совет гражданĕсене 65 çынна персе вĕлернĕ.

Малалла айӑпланакан Фогельтен ыйтаççĕ. Фогель—гитлера çамрӑксен союзĕн членĕ пулнӑ, хӑйне уйрӑм взводӑн командирĕ пулнӑ, службӑра айӑпланакан Штрюфинга пӑхӑнса тӑнӑ. Вӑл çапла пĕлтерет: халĕ айӑпланакансен тенкелĕ çинче манпа юнашар ларакан Штрюфинг, Энгель, Дюре, Янике мирлĕ пурӑнакан совет гражданĕсене вĕлерсе çӳренĕ, тет, анчах хӑй çинчен нимĕн те каламасть.

Ыйтусем панӑ майӑн, Фогел пĕр яла çунтарнӑшӑн хӑй айӑплӑ пулнине йышӑнать. Унтан çакӑ палӑрать: унӑн взвочĕ те мирлĕ пурӑнакан совет çыннисене пере-пере вĕлернĕ. Фогель хӑй вунӑ çынна яхӑн персе вĕлернĕ. Фогель ачасене хӑй вĕлернине йышӑнмасть, анчах айӑпланакан Дюре çийĕнчех çапла калать.

— Фогель суять!—тет.

Çакӑ палӑрать: пĕр ял патĕнче Фогель йывӑç тĕмисем хушшинче пытанса ларнӑ çынсене хӑех персе вĕлернĕ. Фогель вĕлернисем хушшинче хĕрарӑмсемпе ачасем те пулнӑ.

Малалла суд айӑпланакан Энгельтен ыйтса тĕпчет. Энгель хӑйне уйрӑм взводӑн командирĕ пулнӑ, 1936 çултах гитлерла çара хӑйĕн ирĕкĕпе кĕнĕ. Энгель нимĕн те тунмасть. Вӑл пĕр преступлени хыççӑн тепри çинчен калаçа парать. Вӑл Дедовичи-Остров районĕнче вуншар ялсене çунтарса яни çинчен, вырӑнти çынсене ирĕксĕрлесех каторгӑна хӑвала-хӑвала кайни çинчен, кайма кӑмӑл туман е кайма пултарайман çынсене пурне те пере-пере вĕлерни çинчен калаçа парать. Энгель взвочĕ 100 çынна персе вĕлернĕ, 80 çынна яхӑн пӳртсенче çунтарса янӑ. Энгель хӑй 11 çынна персе вĕлернĕ.

Суд çакна палӑртать: Энгель ертсе пынипе, фашистла каторгӑна янине хирĕç тӑнӑ çынсене пурне те питĕрсе илнĕ те пӳрчĕсенче çунтарса янӑ, çав çынсем хушшинче хĕрарӑмсем, ватӑ çынсем тата ачасем те пулнӑ. Энгель каланӑ тӑрӑх, вӑл пĕр ачасене кӑна «20 çынна яхӑн» çунтарса янӑ.

Энгельтен ыйтса пĕлнĕ хыççӑн ирхи лару хупӑнать.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Мускаври канашлӑвĕ пĕлтерни çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

АНГЛИ

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломатиллĕ обозревателĕ Мавко кӑтартса панӑ тӑрӑх, Англин, США-н тата Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Мускаври канашлӑвĕ пĕтни çинчен пĕлтерни уçӑмлӑх икĕ енĕпе çитĕнӳ тунине кӑтартса парать: пĕр енчен, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕн Лондонри сессийĕ ӑнӑçсӑр пĕтнĕ хыççӑн аслӑ державӑсем хушшинче пулнӑ пĕр-пĕрне ӑнланманнине пĕтерсе тӑкнӑ; тепĕр енчен, Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕнче атом энергине контроллесе тӑракан комисси тӑвас тĕлĕшпе висĕ держава пĕр-пĕрнипе калаçса татӑлнӑ. Çакӑ ĕнтĕ Пĕрлешнĕ нацисен генеральнӑй ассамблейине уçма лайӑхрах условисем туса парать. Çакӑ—паллӑ çитĕнӳ пулса тӑрать.

Мускаври калаçусене малтанах «тĕпчевсем тӑвас тата пĕр-пĕрнипе калаçса килĕшес» тĕлĕшпе пулаççĕ тесе пĕлтернĕччĕ. Анчах вĕсем çапах та татӑклӑ решенисем йышӑннӑ. Юлашки решенисем ĕнтĕ аслӑ державӑсен Потсдамри дипломатин стандарчĕсем патне каялла таврӑннине пĕлтереççĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйшн пресс агентствин корреспонденчĕ Кинг Мускавра пичетлесе кӑларнӑ пĕлтерӳ çинчен çапла çырать: Мускаври тĕлпулун паха уйрӑмлӑхĕсене тĕмĕн тери анлӑ пĕлтерӳре те тĕплĕн çырса ӑнлантарса пама çук, мĕншĕн тесен унта пĕр-пĕр уйрӑм проблема е проблемӑсен комплексĕ çинчен мар, «висĕ çĕршывӑн туслӑхĕпе пĕр-пĕрне шанса ĕçлессин никĕсĕсем çинчен» калаçнӑ.

Атом энергийĕ çинчен калаçнине кӑтартса парса обозреватель çапла çырать: «Атом энергине контроль тӑвас тĕлĕшпе калаçса татӑлнине пĕлсе пĕтĕм тĕнче савӑнать. Январь уйӑхĕнче Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн генеральнӑй ассамблейĕ (ЮНО) пухӑнсан, ӑна комисси тума сĕнĕç. Çав комиссин вара атом энергийĕ тĕлĕшпе наукӑллӑ проблемӑсене сӳтсе-явмалла, çав энергипе мирлĕ тĕллевсем тĕлĕшпе çеç усӑ курасси çинчен решенисем йышӑнмалла. Чи пахи вара атомлӑ хĕçпӑшала тата ытти тĕрлĕ хĕçпӑшалсене те, халӑха массӑллӑн пĕтерсе тӑкма тунӑскерсене, нациллĕ хĕçпӑшал хисепĕнчен кӑларса пӑрахни пулса тӑрать».

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Мускаври канашлӑвĕн результачĕсем çинчен «Таймс» хаçатра редакци хӑйĕн статьинче çапла çырать: канашлу ӑнӑçлӑн пĕтрĕ, вӑл Лондонри конференцин ӑнӑçсӑрлӑхĕсене тӳрлетес тĕлĕшпе питĕ пысӑк ĕç турĕ. «Ĕçе Сталин ертсе пыни,—тесе çырать хаçат,—паллах ĕнтĕ канашлу ĕçне ӑнӑçлӑн пĕтерме чылай пулӑшрĕ». Тĕнчери лару-тӑрура висĕ тĕп державӑн государство тытӑмлӑхĕ тĕрлĕрен пулни çинчен палӑртса хаçат çапла çырать: «Анчах çапах та çав висĕ держава пĕтĕм тĕнчипе çирĕп мир тума тӑрӑшаççĕ. Кирек епле пулсан та, çак интерес вĕсене çирĕп союза пĕрлештерсе тӑрать».

«Мускавра йышӑннӑ тĕп решенисем,—тесе çырать малалла хаçат,—процедурӑсене пырса тивеççĕ. Анчах çав процедура ыйтӑвĕсем те паха ыйтусем пулса тӑраççĕ, мĕншĕн тесен Лондонри конференци шӑпах çавӑн пек пĕр ыйту пирки саланса кайрĕ».

Италипе, Венгрипе, Румынипе тата Болгарипе мирлĕ договор проекчĕсене çырса хатĕрлесси çинчен «Таймс» хаçат çапла çырать: «Çавӑн пек тĕрĕс те тивĕçлĕ урӑх план туса хатĕрлеме йывӑр пулнӑ пулĕччĕ». Çавӑн пекех тата хаçат «ытти решенисем те килĕшӳллĕ пулни çинчен» палӑртать.

Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комисси тата Японири Союзниксен Совечĕ çинчен решени йышӑнни пирки хаçат çапла çырать: паянтан пуçласа ĕнтĕ Совет Союзĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе, Англипе тата Китайпа пĕрле пулса ĕçлĕ. Вӑл Японири милитаризмӑн тымарĕсене тӑпӑлтарса пĕтерес ĕçе тата Японин пӑхӑнтарнӑ халӑхсен ирĕклĕхне çĕнĕрен туса хурас ĕçе хутшӑнĕ. Совет Российи Азири аслӑ территорисемпе ытларах та ытларах интересленни, Совет державин хӑйне кӳршĕллĕ Азири халӑхсене влияни парса пыни ӑна Азири проблемӑсене йĕркелесе пырас ĕçе активлӑн хутшӑнтарать; Совет Российин Азири интересĕсем кирек хӑш аслӑ державӑн пекех пысӑк пулса тӑраççĕ. Тӑватӑ державӑн Советне туса хуни Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсен историйĕн çĕнĕ тапхӑрне уçса парать. Çав тапхӑрта ĕнтĕ Лӑпкӑ океанпа интересленекен пур çĕршывсем те пĕр-пĕрнипе килĕштерсе ӑнӑçлӑн ĕçлеме анлӑ майсем пулĕç.

«Таймс» хаçатӑн дипломатиллĕ обозревателĕ çапла çырать: «Мускавра тунӑ килĕшĕве Лондонра кӑмӑллӑн йышӑнчĕç. Мускаври калаçусен çитĕнĕвĕсем ĕнтĕ пур ыйтусем тĕлĕшпе те тĕплĕн калаçнине кӑтартса параççĕ. Чылай параграфсемпе сыпӑксене çиелтен вуланипех ӑнланса илме йывӑр, анчах та вĕсем вĕсене тĕплĕн сӳтсе-явса йышӑннине кӑтартса параççĕ. Кашни ыйту тĕлĕшпе калаçса татӑлса килĕшнĕ.

Лондонра çапла шутлаççĕ: çакӑн пек калаçса килĕшни вӑйлӑ та çирĕп пулать. Процедура ĕçĕсем хут çинче йывӑр пулаççĕ, анчах та вĕсене ансатрах тунӑ пулсан, вĕсен тĕллевĕсене малашне пурнӑçа кĕртесси татах та йывӑртарах пулнӑ пулĕччĕ.

Çавӑн пекех союзниксем хушшинчи сыхӑнусем çинчен калакан сыпӑксенче те тĕплĕн калаçса татӑлнине курма пулать. Пĕлтерĕве вуласа тухнӑ хыççӑн çакна палӑртмалла: пĕлтерӳре ыйтусем çинчен тĕплĕн калаçа пани малашне пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлессин шанчӑкне парать.

США

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Мускаври канашлӑвĕ пĕлтерни çинчен çырнӑ май Америка хаçачĕсем çав канашлун решенийĕсене ырласа саламлаççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçат редакци статьинче çапла çырать: «Мускаври канашлу пичетлесе кӑларнӑ пĕлтерӳ Германипе Япони парӑннӑ хыççӑнхи чи шанчӑклӑ документсенчен пĕри пулса тӑрать». Хаçатра çырнӑ тӑрӑх, çав тери йышлӑ ыйтусем тĕлĕшпе калаçса татӑлни питех те тĕлĕнтерет. Ку канашлура калаçса килĕшни, «аслӑ державӑсем нимĕн тума аптӑраса тӑнине пĕтерсе тӑкать», вӑрçӑ юлашкийĕсене пĕтерсе тӑкма май парать, çĕнĕ хирĕçӳсем пуçланса каймалли паллӑлӑхсене пĕтерет. «Çакӑ ĕнтĕ мир тĕлĕшпе тунӑ çĕнтерӳ, çапла вара, этемлĕхĕн çĕнтерĕвĕ пулса тӑрать».

Атом энергине контроль туса тӑрасси пирки калаçса татӑлни çинчен палӑртнӑ май хаçат çапла çырать: «Ку канашлу хӑй тунӑ ĕçсемпе мухтанма пултарать, унӑн решенийĕсем пĕтĕм тĕнчене çамӑллӑх парĕç».

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çапла çырать: Мускаври канашлу çинчен пĕлтерни Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем çав тери пысӑк ĕç тунине, вĕсем хӑйсен пултарулӑхне кӑтартнине ĕнентерет. Канашлура пуринчен ытларах процедурӑсем çинчен калаçса татӑлнӑ, çавӑнпа та вĕсен результачĕсем çинчен калаçма тытӑничен вĕсене ĕçре тĕрĕслесе пӑхас пулать. Анчах та юлашки темиçе уйӑх хушшинче шӑпах ĕнтĕ çакӑн пек процедурӑсем туса хатĕрлеме кирлĕ ытларах та ытларах палӑрса пычĕ. Мускаври канашлу вара ку тĕлĕшпе тивĕçлĕ аппарат тума йышӑнчĕ. Ку ĕçе унччен кирлĕ пек хакламан.

Нью-Йоркра тухакан «Ньюс» хаçат реакционерсен позицине каласа парса, Мускаври канашлун результачĕсене пĕчĕклетсе кӑтартма хӑтланать.

ЛИВАНӐН ПАРИЖРИ ДИПЛОМАТИЛЛĔ МИССИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПАРИЖ, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Ливанӑн Парижри дипломатиллĕ миссийĕ Франципе Англин декабрĕн 13-мĕшĕнче тунӑ килĕшĕвĕ çинчен Ливан правительстви мĕнле шухӑшлани çинчен пĕлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ.

Çав пĕлтерӳре çапла каланӑ: «Пĕрлешнĕ нацисен организацине кĕрекен ытти çĕршывсемпе пĕртан правалла пулса тӑрса, Ливан ют çĕршывсен çарĕсене пурне те Ливанран вӑхӑтра илсе кайма ыйтать. Ливан пĕтĕм тĕнчери мĕнпур çĕршывсемпе туслӑн пурӑнма тӑрӑшать. Пĕрлешнĕ нацисен тата араб çĕршывĕсен лигин членĕ пулса тӑрса, Ливан араб çĕршывĕсен никама пӑхӑнманлӑхне хирĕç пыракан тавлашуллӑ çĕршыв пулма килĕшмест».

ФРАНЦИ АЛБАНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШӐННИ

ПАРИЖ, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тӑрӑх, Франци Тиранӑри миссийĕн пуçлӑхĕ Албани правительствин ют çĕршыв ĕçĕсен министрне çапла пĕлтернĕ: Франци правительстви Албанин çĕнĕ правительствине йышӑнать, тенĕ.

Ют çĕршыври çĕнĕ техника

САМОЛЕТСЕНЕ РАДИО ТӐРӐХ ТЫТСА ПЫНИ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатӑн корреспонденчĕ Атлантик-Ситирен (Нью-Джерси штачĕ) çапла пĕлтерет: США тинĕс ведомстви вĕçнĕ чухне радио тӑрӑх тытса пыракан пĕчĕк самолет-автоматпа мишень вырӑнне усӑ курма пуррине кӑтартса панӑ. Çав самолет реактивлӑ двигатель пулӑшнипе вĕçет. Вӑл сехетре 950 километра яхӑн вĕçсе каять; çаврӑнкалас енчен илсен, вӑл боевой истребительсенчен те ирттерет; унӑн çуначĕсен тӑршшĕ—3,6 метр; реактивлӑ двигателĕн диаметрĕ—240 миллиметр; двигатель пĕр сехет хушши ĕçлеме пултарать. Çавӑн пек самолета персе ӳкерес пулсан, унӑн двигателĕ хӑй тĕллĕнех парашютпа анса ларать.

Çавӑн пекех, тет малалла корреспондент, самолетсене радио тӑрӑх тытса пынине кӑтартса панӑ. Çак шутпа «Хейллкейдт» истребитель авианосец çинчен пилотсӑрах сывлӑша вĕçсе хӑпарнӑ, унта тĕрлĕ йышши маневрсем тунӑ хыççӑн вара çĕр çинчи базӑна анса ларнӑ. Анчах та хальхи вӑхӑтра самолета радио тӑрӑх каялла авианосец çине вĕçтерсе çитмелли майсене шыраса тупман.

ИРАН АЗЕРБАЙДЖАНĔНЧИ ЛАРУ-ТӐРУ

ТЕГЕРАН, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Тавризра тухакан «Азербайджан» хаçат «Тĕнче пирĕн автономие йышӑнма тивĕçлĕ» ятлӑ статьяра çапла çырать: «Пирĕн вӑхӑтра пилĕк миллион çынлӑ азербайджан халӑхне халиччен пекех чуралӑх сӑнчӑрĕнче тытса тӑни—сĕмсĕр япала. Иранӑн никама пӑхӑнманлӑхне тата унӑн пĕрлĕхне пӑсмасӑр, эпир хамӑрӑн килте хамӑр хуçа пуласшӑн...

Иран Азербайджанĕнче сарӑлса пыракан наци юхӑмĕ пĕтĕм халӑх юхӑмĕ пулса тӑрать. Хамӑрӑн чи лайӑх ывӑлсем пĕтĕм вӑй хурса паттӑррӑн тӑрӑшнипе эпир автономи туса хутӑмӑр, наци правительстви çак çĕнтерĕве алӑран кӑларса ярас çук. Çак ĕçре ӑна пĕтĕм азербайджан халӑхĕ пулӑшĕ».

ТЕГЕРАН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Тегеранри «Бао» хаçат пĕлтернĕ тӑрӑх, Иран Азербайджанĕн шалти ĕçсен министрĕнчен çак хаçатӑн корреспонденчĕ çапла ыйтнӑ: урӑх çĕрте пурӑнакан азербайджанецсене ĕçе илеççĕ-и? тенĕ. Министр корреспондента çакӑн пек ответ панӑ: халӑха вĕрентес ĕçпе культурӑна сарса яма Иран Азербайджанне ăстӑн работникĕсем нумай кирлĕ, çавӑнпа та вĕсене хапӑл тусах йышӑнаççĕ, тенĕ.

ГРЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ЗАМ-а ДЕМОНСТРАЦИ ТУМА ИРĔК ПАМАН

ПАРИЖ, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тӑрӑх, Греци халӑхĕн ирĕклĕх фрончĕн (ЭАМ-ӑн) руководстви ЭАМ представителĕсене правительствӑна кĕртме тата Грецири кĕрешӳ пирки тытса хупнӑ çынсене пурне те каçарма ыйтса демонстраци тумашкӑн ирĕк пама ыйтнӑ. Греци министрĕсен совечĕн председателĕ Софулис çакна хирĕç çапла каланӑ: çавӑн пек демонстраци тума ирĕк памастпӑр, каçарасси çинчен калакан закона улӑштармастпӑр, Греци правительствине сылтӑмрисене е сулахайрисене кĕртсе аслӑлатмастпӑр, тенĕ.

НОРВЕГИРИ МУНИЦИПАЛЬНӐЙ ОРГАНСЕНЕ СУЙЛАНИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

ОСЛО, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Норвегири пур хуласем те муниципальнӑй органсене суйлании результачĕсене пичетлесе кӑларнӑ. Çав результатсем кӑтартнӑ тӑрӑх, рабочисен партийĕ 12 хулара çиеле тухнӑ. 29 хулара, вӑл шутра чи пысӑк хуласенче—Ослора, Бергенра, Тронхеймра, Драммен[illegible] тата Ставангерта—рабочисен партийĕ коммунистсен партийĕпе пĕрле пулса [illegible] тухнӑ.

Ытти партисем пĕчĕкрех 18 хулара çиеле тухнӑ.

Республика тӑрӑх

30 ÇУЛ СЦЕНА ÇИНЧЕ

Çак кунсенче Пĕтĕм Российри театр обществин (ВТО) Чӑваш республикинчи уйрӑмĕ тата Академи театрĕн коллективĕ Чӑваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ М. С. Бурмистров сцена çинче 30 çул ĕçленине паллӑ тӑвать. Çав ятпа театрта Л. Шейнинӑн «Кому подчиняется время» ятлӑ пьесине кӑтартаççĕ. Ку пьесӑна юбиляр лартать.

ТЕАТР СТУДИЙĔ

Халӑх творчествин çурчĕ çумĕнче, драмкружоксене валли çителĕклĕ квалификациллĕ руководительсем хатĕрлес шутпа, театр студийĕ уçнӑ. Унта халь производствӑран уйрӑлмасӑр 27 çын вĕренет. Студие Чӑваш АССР искусствӑсен тава тивĕçлĕ деятелĕсем—Г. Морев, Е. Токмаков, Чӑваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Мудров ертсе пыраççĕ. Студире икĕ çул вĕренмелле.

ÇĔНĔ КВАРТЕТ

Чӑвашсен государство филармонийĕ çумĕнче пуçласа струннӑй квартет организациленĕ. Унта икĕ сĕрме купăс, 1 альт тата 1 виолончель. Квартет тӑватӑ концертра пулнӑ. Унӑн программинче—классиксен тата совет композиторĕсен произведенийĕсем. Халĕ квартет ятарласа чӑваш музыкинчен пухнӑ программа хатĕрлет.

Совет медицинине тав тӑватӑп

Эпĕ пĕрмаях колхозра ĕçленĕ, колхоз кĕтĕвне кĕтнĕ. Виçĕ çул каярах манӑн питĕ пысӑк хуйӑх пулчĕ: эпĕ куçсӑр пулса лартӑм. Малтан манӑн—хӑрах куç, кайран тепри те курми пулчĕ. Пĕр çулталӑк хушши кун çути курмасӑр лартӑм. Çав çулталӑк маншӑн мĕн тери хӑрушӑ пулнине куçсӑр çын кӑна ӑнланса илме пултарать. Манӑн телее: мана Обыково больницинчи Тайков доктор патне кайма канаш пачĕç. Эпĕ унта çитме виçĕ кун утрӑм. Манӑн икĕ куçа та операци турĕç. Куçсем иккĕшĕ те лайӑх кураççĕ. Халĕ 50 çула çитнĕ пулин те эпĕ темле ĕç те тума пултаратӑп. Çак телейшĕн эпĕ совет медицинин работникĕсене, Тайков доктора тав тӑватӑп.

Ефим ГРИГОРЬЕВ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарта кĕсре çухалнӑ. Тĕсĕ — турӑ, ячĕ—«Анюта», 1942 çулта çуралнӑ. Çак адреспа пĕлтерме ыйтатпӑр: Цивильский район, д. Чиричкасы, колхоз «Малалла».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатӑн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнӑç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалӑх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00484 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Тираж 16.000 экз.